Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи А. Г. Николаев ячĕллĕ Калайкасси шкулĕ

# ХЫÇАЛТИ ПАРТА

interhypar@mail.ru

Кайри мала!

#2 /06/ 2007

Шкул ачисен хаçачĕ



**Нарăсăн 22-мĕшĕ — Пушăн 8-мĕшĕ**

*Хисеплĕ вулакансем!*



Хальхи вăхăтра вĕренӳсĕр ниçта та каяймăн. Мĕнле те пулин ĕçе кĕрес пулсассăн сана вĕренӳ кирлĕ. Хамăрăн ăс пуянлăхне эпир вара хаçатран, телевиденирен пĕлсе тăратпăр. Çак ĕçе «Хыçалти парта» хаçат питĕ лайăх пурнăçлать. Ку хаçатра тĕрлĕрен интереслĕ фактсем, пулăмсем çинчен вулама пулать.

Ачасем, çырма ан хăрăр, тен, эсир çырнă статьясем, сăвăсем çынсен чунне тыткăнлĕç. Хальхи вăхăтра пултарулăха темле майпа та аталантарма пулать. Хăвăр шухăшсене статья е сăвă урлă кăтартма пулать.

Кам пĕлет, тен, çынсен сирĕн пурнăçри, сирĕн шкулти пулăмсем çинчен пĕлес килет.

Çырăр, çырăр, ачасем.

**Татьяна Степанова,**
**8 класс,**
**Очăкасси шкулĕ**

# НАРĂСĂН 24 -МĔШĔНЧЕ ЮРИЙ ФЕДОТОВА АСĂНСА ЙĔЛТĔРÇĔСЕН ĂМĂРТĂВĔ ИРТЕТ

Нарăсăн 24-мĕшĕнче Калайкасси вăтам пĕлӳ паракан шкулта Чăваш Республикин Юрий Иванович Федотов чемпиона асăнса иртекен республикăри йĕлтĕрçĕсен V -мĕш эстафети иртĕ.

Юрий Иванович Федотов 1964 çулхи пуш уйăхĕн 4-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Сăпайкасси ялĕнче çуралнă. 15 çулта шкул ачисем хушшинче Ĕçпе хӳтĕлеве хатĕр /ГТО/ хĕллехи нумай кĕрешӳ мелĕн /йĕлтĕрпе чупни, турник çинче туртăнни, пăшалпа тĕл пересси/ Чăваш Республикин чемпионĕ пулса тăнă.

1979 çулхи авăнăн 1-мĕшĕнче Муркашри ачасен спорт шкулне, 1980 çулта Калайкасси шкулне вĕренме кĕнĕ.

Юрий Федотов талантлă та нумай енлĕ аталаннă çын пулнă. Йĕлтĕрпе чупса, çăмăл атлетикăра, самбо кĕрешӳре приз вырăнĕсене сахал мар йышăннă.

1984 çулта ЧПУн строительство факультетĕнче вĕренекен III курс студенчĕн пурнăçĕ сарăмсăр татăлать.

/Малалли 9-мĕш стр./



Александр Федотов, унăн пиччĕшĕ, кубокпа

## «ХЫÇАЛТИ ПАРТА» «ЭПĔ РАÇÇЕЙ ГРАЖДАНИНĔ» АКЦИН ÇĔНТЕРӲÇИ

Шупашкарти ачасемпе яшсен «Эткер» туризм килĕнче Раççейре 7-мĕш хут иртекен «Эпĕ Раççей гражданинĕ» акцийĕн республика шайĕнчи этапăн финал турĕ иртрĕ. Республикăри районсем хăйсен чи лайăх проекчĕсене тăратрĕç.

Муркаш районĕнчен çак чыса «Хыçалти парта» хаçат тата Муркаш шкулĕн «Родина» çарпа патриот клубĕ хутшăнма тивĕçлĕ пулчĕç.

Проекта хӳтĕлеме 10 минут уйăрса пачĕç. Жюри ăна актуаллăхне, тăратнă проблемăсен кирлĕлĕхне, социаллă пĕлтерĕшне, юридици тĕлĕшĕнчен право тивĕçлĕхне, влаç структурисемпе тĕрлĕ шайра çыхăнса тăнине, чăнлăхне, перспективлăхне, экономика тĕлĕшĕнчен шайлашăннине кура хакларĕ. Çак ала витĕр тухма питĕ кăткăс пулин те, «Хыçалти парта» хаçат 2-мĕш вырăна тухрĕ. Пĕрремĕш вырăна Етĕрне хулинчи 2-мĕш номерлĕ шкулăн «Шанчăк» проект тивĕçлĕ çĕнсе илчĕ. Проект сусăрланнă сăн-питлĕ çынсене социаллă шайра хӳтĕлеме çыхăннă. Унăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри — хăйсен шкулĕнче вĕренекен хăрушла пиçсе кайнă Надя Максимова валли пластика операцине ирттерме укçа пуçтарасси. Надя нумай ачаллă çемьере пурăнать, амăшĕ — инвалид, ашшĕ — вилнĕ. Паллах, çак çемье операци валли кирлĕ укçана пырпине тавăрса кăларсан та тупаймĕ. 3-мĕш вырăна «Çул — ялăн пурнăç артерийĕ» проектпа Патăрьелсем çĕнсе илчĕç. Республика шайĕнче çĕнтернисем Раççей шайĕнче



ăмăртĕç. Эпир конкурс председателĕпе Анатолий Пайгусовпа тĕл пултăмăр.

— Конкурса тăратнă проектсем ординарлă, стандартлă мар. Кашнинех хăйĕн проблема тата çак проблемăна татса памалли çул-йĕр. Вĕсене экологи, социаллă-педагогикăллă /Елчĕк районĕнчи «Ачасем — ачасене» тата Муркаш шкулĕн «Ывăл-хĕрĕ патриот пулсан Тăван çĕршыв пурăнать» проектсем/ тата социаллă проблемăсене татса пама хатĕрленĕ проектсем çине пайлама пулать.

Çак проектсем питĕ кирлĕ. Вĕсем общество проблемисене татса пама пулăшаççĕ.

**Редакци**

## НОМЕРТЕ:

**2 стр.**
«Эпир пур çĕртре те маттур...»
Сывă пурнăç çулĕпе

**3 стр.**
«Intelнa вĕренетпĕр»
Шкулта çĕнĕ технологисем

**4 стр.**
«Хĕрсене паразитла пурнăçпа пурăнма вĕрентеççĕ-и?»
Шухăшсен клубĕ

**5 стр.**
«Чăваш чĕлхи кирлĕ»
Пирĕн тĕллев

**8 стр.**
Çирĕп чăмăрлă илем

**9 стр.**
Арсений Тарасов — паллă тележурналист кăна мар